Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи майăн 5-мӗшӗнчепе тухать

ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMVIII · ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMIX

*36 (7676) №* ✻ *Юн кун, 2009 ҫулхи майăн (ҫу) 6-мӗшӗ* ✻ *Хакӗ ирӗклӗ*

**Ҫур аки – 2009**

## «Тухăҫ пуласса шанатпăр»

**РАЙОН УЙ-ХИРӖСЕНЧЕ: ҫу уйăхӗн 5-мӗшӗ тӗлне районта ҫурхи культурăсене 3424 гектар (33,2 процент) акнă. «Колос» обществăра (50 гектар) ҫур аки вӗҫленнӗ. Ҫавăн пекех тырă-пулă акас ӗҫсем Бархаткин (90 процент), Сретинский (83 процент) фермер хуҫалăхӗсемпе «Оринино», «Восток», «Герой», «Свобода» хуҫалăхсенче те 87-50 процент лаптăк ҫинче пурнăҫланă. Тырă-пулă акнипе пӗрлех хуҫалăхсенче 31 гектар пӗр ҫул ӳсекен курăксене, 32 гектар выльăх кăшманӗ акса хăварнă.**

Ҫапла калаҫрӗҫ уй хӗрринче ларакан ГАЗ-52 автомашина ҫинчен вăрлăхпа минераллă удобренисене сеялкăсене тултарнă май кану-мӗнне пӗлмесӗр ӗҫлекен акаҫăсем.





Ҫакнашкал ӳкерчӗке курма май килчӗ ҫу уйăхӗн 4-мӗшӗнче Ленин ячӗпе хисепленекен ял хуҫалăх производство кооперативӗн Хорнуй уйрăмӗнчи уй-хирӗнче. Ӗҫ кунӗ пуҫланнăччӗ кăна пулин те, хуҫалăх ертӳҫи Олег Петрович Яндимиркин уй-хир ӗҫченӗсен ӗҫӗпе кăсăкланни хуҫалăхра ҫур аки ӗҫӗсем ҫине пысăк тимлӗх уйăрнине кăтартса парать.

– Ҫурхи кун ҫулталăк тăрантарни тата хуҫалăх экономикин никӗсне вăйлатни ҫур акине хутшăнакан кашни ӗҫченшӗнех паллă. Ӗҫсем ăнса пыччăр тесе малараххах ҫурхи уйхирти ӗҫ планӗсене кооператив ӗҫченӗсемпе пӗрле ҫирӗплетрӗмӗр, ӗҫ нормисене тата пурнăҫланă ӗҫсен хаклавӗсене палăртса хутăмăр. Ҫапла вара паян хирте ӗҫлекен кашни ӗҫчен хăй мӗншӗн ӗҫленине пӗлет. Ҫавăнпах ӗҫрен пăрăнса юлас текенсем те ҫук, – терӗ О. Яндимиркин Алексей Михайлов акаҫăпа ака нормисем пирки интересленнӗ май **(пӗрремӗш сăн ӳкерчӗкре).**

**(Вӗҫӗ 3-мӗш стр.).**

**Ҫӗнтерӳ кунӗ ҫывхарнă май**

## Аслă Ҫӗнтерӗве паллă тăвăпăр

Аслă Отечественнăй вăрҫăра Аслă Ҫӗнтерӳ тунăранпа кăҫал 64 ҫул ҫитет. Ял тăрăхӗсенче халӗ ҫак куна халалланă мероприятисем иртеҫҫӗ. **Майăн 7-мӗшӗнче вара районти Культура ҫуртӗнче 10 сехетре Аслă Ҫӗнтерӗве халалласа вăрҫă тата ӗҫ ветеранӗсемпе, призывниксемпе тӗл пулу иртет.**

Аслă ăрури салтаксемпе иртнӗ тӗл пулу хыҫҫăн призывниксен кунӗ малалла тăсăлӗ. Пулас салтаксем районти историпе краеведени музейӗнче пулӗҫ. Районти ача-пăча библиотекинче ҫӗршыва сыхлама каякансем салам сăмахӗсене йышăнӗҫ. Ку мероприяти «Сывлăх» спорт комплексӗнче салтак ӳсӗмне ҫитичченхи ҫамрăксен спартакиадипе вӗҫленӗ.

**Ҫак кунах каҫхине районти Культура ҫуртӗнче Аслă Ҫӗнтерӗве халалласа 18 сехет ҫурăра хаваслă пуху пуҫланать.** Ун хыҫҫăн сцена ҫине ҫӳлерех асăннă ветерансен хорӗ тухӗ.

**Майăн 9-мӗшӗнче пур ял тăрăхӗсенче те уяв митингӗсем иртеҫҫӗ.** Муркашра вăл район администрацийӗн ҫурчӗ умӗнчи лаптăкра 10 сехетре пуҫланать. Пуҫтарăннисене район пуҫлăхӗ Ю.А. Иванов, Муркаш тата Элӗк районӗсен ҫар комиссарӗ В.В. Буклаков тата ыттисем саламлӗҫ, вăрҫăпа ӗҫ ветеранӗсем тухса калаҫӗҫ. Кунтах ҫамрăк армеецсен парачӗ иртет. Ун хыҫҫăн спорт мастерӗн В. Шалтыковăн парнисене ҫӗнсе илессишӗн велосипедпа чупакансен ăмăртăвӗ пулать.

Уяв Ҫӗнтерӳ паркӗнче малалла тăсăлать. Вăрҫăра вилнисене асăнса лартнă палăк умне чечексен ҫыххисене хунă хыҫҫăн Муркаш шкулӗнче вӗренекенсем сăмах илӗҫ. Кунти сцена ҫинче Ҫатракассинчи вăтам шкул ачисен концерчӗ пулать.

Уяв ҫакăнпа вӗҫленмест-ха. Каҫхине район центрӗнче вăл малалла тăсăлать. 20 сехетре районти Культура ҫурчӗ ҫумӗнчи пултарулăх коллективӗсен концерчӗ пулать. Ҫӗнтерӳ кунӗ уяв фейерверкӗпе вӗҫленӗ.

Эппин, уявра та пӗрле пулар, ӗҫре те малалла пӗр тӗллевпе вăй хурар.

**Ыр кăмăллăх**

## Ҫынна савăнăҫ парнелесси те – савăнăҫ

Апрелӗн 18-26-мӗшӗсенче «Пӗтӗм Раҫҫейри «Ҫуркуннехи ырăлăх эрни» ирӗклӗ акци» иртрӗ. Ҫак хушăра районта тӗрлӗ мероприятисем пулчӗҫ. Муркашри пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан вăтам шкулта вӗренекенсем вара ҫак хушăра ачасене кирлӗ хатӗрсем пуҫтарчӗҫ. Пулăшу кирлӗ ҫемьесем сахал мар вӗт районта. Шоколад-пӗренӗкрен, кӗнеке-тетрадьрен пуҫласа, ачасен тумтирӗсем таранах илсе килчӗҫ. Пӗтӗмпе 10 курупка ытла пуҫтарăнчӗ тӗрлӗрен япала.





Иртнӗ эрне кун шкул ачисем хăйсем пуҫтарнă япаласене Чăваш Республикин Сывлăх сыхлавӗ тата социаллă аталану министерствин пирӗн районти социаллă хӳтлӗх пайне пачӗ май хăйсем ҫак ырă ӗҫе туса йăнăшманнине тепӗр хут лайăх ăнланчӗҫ.

– Ҫак хатӗрсене пирӗн шкул ачисем пӗтӗм кăмăлтан пуҫтарчӗҫ. Вӗсем хăйсен ҫӗнӗ хуҫисене тупасса шанатпăр, – терӗ Муркаш шкул директорӗн воспитани енӗпе ӗҫлекен ҫумӗ Г.Л. Сидюшкина социаллă хӳтлӗх пайӗн етӳҫине Н.П. Петровна.

Нина Пантелеевна ачасене пархатарлă ӗҫшӗн чунтан тав турӗ, ҫакна палăртрӗ:

– Пирӗн районта нумай ачаллă ҫемьесем кăна 480. Вӗсенче 1555 ача ҫитӗнет. Сахал тупăшлă 2042 ҫемьере 3608 хӗр ачапа арҫын ача ӳсет. Ҫавăн пекех ăнăҫсăр ҫемьесем те пур. Эсир пуҫтарнă тумтирпе атă-пушмака, кӗнеке-тетраде, тутлă пылак ҫимӗҫе шăпах ҫакăн пек йывăр лару-тăрури ҫемьесенчи ачасене парăпăр. Ҫапла майпа хăвăрăн ырă ӗҫӗрпе эсир миҫе киле, миҫе ачана савăнăҫ парнелетӗр. Вӗсен ячӗпе те сире пурне те пысăк тав. Малашне те ҫавăн пекех ырă кăмăллă пулăр, пулăшу кирлӗ ҫынна пулăшмасăр ан иртӗр.

Акă ачасем курупкасене хаваспах социаллă хӳтлӗх пайӗн машинисем ҫине тиеме пуҫларӗҫ. Кашнин куҫӗнче савăнăҫ ҫиҫет. Чăннипех те, мӗнле телей иккен вăл ҫынна телей, савăнăҫ парнелесси. Ырă ӗҫсен эрнинче ҫеҫ мар, кулленех асра тытса пурăнасчӗ ҫакна. Ҫак маттур ачасенчен юлас марччӗ.

**Л. ТУКТИНА.**

**Район хаҫачӗн хисеплӗ ӗҫченӗсем, ветеранӗсем, хаҫат тусӗсемпе вулакансем!**

Сире пурне те паллă кунпа – район хаҫачӗн 65 ҫулхи юбилейӗпе чун-чӗререн саламлатăп.

Аслă Отечественнăй вăрҫăн хаяр кунӗсенче кун ҫути курнă хаҫат районта пурăнакансене Аслă Ҫӗнтерӳшӗн тылра ырми-канми вăй хума хавхалантарнă, совет салтакӗсен вăрçă хирӗнчи паттăрлăхӗпе паллаштарнă. Вăрҫă хыҫҫăн та халăх хуҫалăхне ура ҫине тăратас ӗҫре район хаҫачӗ халăха мирлӗ ӗҫе мобилизацилессинче хăйӗн тӗп вырăнне йышăннă.

Паян район хаҫачӗ район пурнăҫне ҫутатакан пӗртен пӗр массăллă информаци хатӗрӗ пулса тăрать. Ҫивӗч перо ӗҫченӗсем ҫӗнӗлӗхсемпе улшăнусем ҫинчен вулакана тӗрӗс те ăнланмалла тата ҫийӗнчех каласа пама тăрăшаççӗ. Хаҫатра тӗрлӗ темăсене ҫутатни, тӗрлӗ жанрлă материалсем пулни хаҫат сăн-сăпатне палăрмаллах улăштарать. Вӗсем вулакана хăйӗн шухăшне калама хистени эсир хăвăрăн тивӗҫӗре кирлӗ пек пурнăҫланине кăтартса парать. Тавах сире ҫакăншăн. Ҫитӗнекен ăрăва воспитани парассинче те «Ҫӗнтерӳ ялавӗ» пӗлтерӗшлӗ вырăн йышăнать.

Эсир малашне район пурнăҫне татах та анлăрах, туллинрех ҫутатасса, хаҫатпа вулакан хушшинчи ҫыхăну татах та ҫирӗпленессе, хаҫат страницисенче ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ ярăмсем уҫăласса, тӗрлӗ жанрлă интереслӗ материалсем пичетленессе шанас килет. Районта пурăнакансене вара район хаҫачӗпе туслă пулма, кашни килтех ăна ҫырăнса илме сӗнетӗп.

Сире пурне те ҫирӗп сывлăх, телей, вăрăм кун-ҫул, ӗҫре ăнăҫу сунатăп. Ҫивӗч перо ăстисен интереслӗ статьясем ытларах ҫырăнччăр, пултарулăхӗпе ăсталăхӗ ӳссех пытăр. Вулакансемшӗн район хаҫачӗ яланах чи юратнă хаҫат пултăр.

**Район пуҫлăхӗ Ю.А. ИВАНОВ.**

**Патриотла воспитани**

## Республика вăййисем Муркашра пулӗҫ

Республикăри 41-мӗш «Зарница» тата «Орленок» ҫамрăк армеецсен хумӗн (ҫарпа спорт) вăййисене кăҫал Муркаш районӗ йышăнма хатӗрленет. Вăйăсене хăш вырăнта иртересси, хăнасене тивӗҫлӗ кӗтсе илсе ăсатса ярасси тата ҫакăнпа ҫыхăннă тӗрлӗ йӗркелӳ саманчӗсене сӳтсе яврӗҫ иртнӗ кунсенчи канашлура.

Республикăри Вӗрентӳ министерствин ҫамрăксен политикин управленийӗн пуҫлăхӗ О.Ефремова каланă тăрăх, кăҫалхи вăйăсенче кадет класӗсем те хутшăнаççӗ. Малтан палăртнипе Лантăш вăрманӗн уҫланкинче (ку вырăна комисси йышăнчӗ) 80 команда ăмăртмалла. «Зарница» тата «Орленок» вăййисене июнӗн 26-мӗшӗнчен пуҫласа июлӗн 1-мӗшӗччен ирттермелли паллă. Апла пулсан Муркашсен ҫине тăрсах ӗҫлемелле: шкул ачисен те, вăйăсене йышăнса ирттерекенсен те тивӗҫлӗ шай тытса тăмалла.

**Н. АНДРЕЕВА.**

**Вӗрентӳ**

## Тӗрӗслев ӗҫӗсем – 4-мӗш класра

Кăҫалхи вӗренӳ ҫулӗ пуҫламăш шкула пӗтерекенсемшӗн ҫӗнӗлӗхпе вӗҫленӗ: вӗсен вӗренӳ ҫитӗнӗвӗсене палăртма тест формипе иртекен тӗрӗслев ӗҫӗсем пулӗҫ. Районти вӗрентӳ пайӗнчен пӗлтернӗ тăрăх, тестсене чăваш чӗлхипе, математикăпа тата вырăс чӗлхипе ирттерме палăртнă. Вырăс шкулӗсенче, паллах, чăваш чӗлхипе тӗрӗслев ӗҫӗ пулмасть.

Хальлӗхе федераци шайӗнче нимӗнле хушусем те ҫук, Чăваш Республикин Вӗрентӳ министерстви ыйтнипе вара Чăваш Республикин вӗрентӳ институчӗ 4 класра вӗренекенсен вӗренӳ ҫитӗнӗвӗсене палăртма методика рекомендацийӗсене, вăл шутра вӗренӳ пахалăхне палăртмалли критерисене те хатӗрленӗ.

Ҫак тӗрӗслев ӗҫӗсем вырăнти шкулсенчех иртеҫҫӗ. Пӗр кунра пӗр тӗрӗслев ӗҫӗнчен ытла пулмалла мар. Ӗҫе пурнăҫлама пурӗ 90 минут параҫҫӗ. Вырăс тата чăваш чӗлхисемпе тест ыйтăвӗсем пӗр калав тавра пулаççӗ. Тӗрӗслев ӗҫӗн тепӗр пайӗ – ачан пӗр-пӗр темăпа хăйӗн шухăшне пӗлтерсе ҫырасси. Кунта чăваш чӗлхипе 70 сăмахран кая мар, вырăс чӗлхипе 50 сăмахран кая мар калăпăшлă ӗҫӗсем ҫырмалла. Класра тӗрӗслев ӗҫӗ вăхăтӗнче шкул администрацийӗн представителӗ пулмалла. Ӗҫсене тӗрӗслесси те, вӗсене тишкересси те харпăр хăй шкулӗнчех пулать.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Юбилей**

## Поздравляем



Любимую жену, внимательную маму, ласковую бабушку – **СМИРНОВУ Александру Петровну**, проживающую в деревне Полевые Хачики, от всей души поздравляем с юбилеем. Желаем здоровья и счастья на долгие годы жизни. Оставайся такой же доброй и красивой.

**С поздравлением муж, сын, дочь, зять, внуки и родные.**